# ТУ-ПАТТĂР

Пĕтĕм халăх шухăш-кăмăлĕпе ĕмĕчĕсен туртăмне туллин палăртма пултаракан поэт кăна ун асне яланлăха кĕрсе юлма пултарать. Ун пек сăвăçсем саманапа пĕрех пулаççĕ. Ухсай Яккăвĕ шăп та шай çавăн пеккисен шутĕнче. Ячĕ унăн чăвашсен çĕнĕ культурин анлă анине уçакансен чи малти ретĕнче тăрать. Ухсайăн унти уйрăм каç-алăкĕ сарлака та вăрăм. Хĕртсе пăхакан хĕвел типĕтсе лартма пултарас пĕчĕк çырма пек мар, чăрмав чулĕсене сире-сире хăйĕн тĕп çулне уçнă аслă Атăл евĕр пулчĕ вăл: çуралнă ялĕн çăлкуçĕсенчен шăнкăртатса тухрĕ те, Тăван çĕршыв тăрăх анлăн сарăлса, çынсен савăнăçĕпе хуйхи-суйхине чун-чĕрепе туйма пултаракансене чунлăхлă та чăнлăхлă сăмахсемпе хавха-лантарса пычĕ.

Çырма та вăл пуриншĕн те паллă япаласемпе ĕç-пулăмĕсем çинченех — хура çĕр, хресченĕн тертлĕ ĕçĕ-хĕлĕпе кулленхи пурнăçĕ çинчен — çырчĕ. Апла пулин те, тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, çав ĕмĕрхи ăнлавсем Ухсай Яккăвĕн пултарулăхĕнче кивĕлле янрамаççĕ, аталанса та улшăнса, çĕнĕ пахалăхсене куçса пыраççĕ.

Халăх юрри пулса кайнă «Юратрăм эп, хирсем, сире» ятлă пĕрремĕш сăвăран пуç-ласа автора çĕршывĕпе чапа кăларнă «Кĕлпук мучи» поэма таранах поэтăн каш-ни-пĕр произведенийĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулчĕ.

Мĕнпе кăмăла илентереççĕ-ха вĕсем? Халăха çывăх пулнипе, паллах. Хăйне-евĕрлĕ талант — акă мĕн Ухсай пулта-рулăхне чĕрĕлĕхпе пурнăç вăйĕ парса тăра-канни. Çакна вăл хăй кĕскен те туллин çак сăмахсемпе палăртрĕ:

Васкарăм, халăхран юлмасăр,
Вĕренĕве, ĕçе, вăрçа.

Çакăнта, официаллă паллă тунинче кăна мар, халăх поэчĕ тенин тарăн пĕлтерĕшĕ, Чăваш халăх поэчĕ хисеплĕ ята Ухсай Яккăвне 1950-мĕш çултах панă пулин те.

Яков Гаврилович Ухсай 1911-мĕш çулхи чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче çуралнă. Шăпи пӳрнипе вăл хăйĕнчен çирĕм çул маларах куç уçса кун курнă чăвашсен классикăллă поэзине пуçарса яракан Константин Ивановпа пĕр ялтах çуралнă, икĕ поэт хушшинче йăхпа юн тăванлăхĕ те пур. Çав ял — лайăхрах пурнăç шыраса Атăл тăрăхĕнчен Урал тăвĕсем пуçланакан ене, пушкăрт çĕрĕ çине, куçса пырса вырнаçнă хастар чăвашсем пуранакан Слакпуç.

Якку ачаранах хăйĕн ентешĕсене усă кӳме ĕмĕтленнĕ. «Каçсерен, — асилет поэт автобиографийĕнче, — чи çутă çăлтăра ăшăмра кĕлтăваттăм, халăх йăлипе, çичĕ хутчен: «Мана пысăк телей парсамччĕ, хутла вĕренме пулăшсамччĕ, ял халăхĕ валли хутсем çыракан ырă тиек пулма май парсамччĕ», — тесе тархаслаттăм».

Тиеке тухма ĕмĕтленекенскер — писатель пулса тăрать. Ял халăхĕшĕн çунса çырнă япаласем вара ялйышшăн кăна мар, тăван халăхшăн, çĕршыв чиккин ытти енĕсенче пурăнакансемшĕн те юратса вулакан кĕнекесем пулса тăраççĕ. Вĕсен йышĕнче — сăвăсен пуххисем, «Ту урлă çул» тата «Акăшкӳл» сăвăлла романсем, «Ту тимĕр» тата «Шуйттан çури» трагедисем, «Ача чухнехи çăлтăрăм» трилоги. Çак трилогишĕн тивĕç пулнă та поэтăмăр Патшалăх премийĕсене: Чăваш АССРĕн К. Иванов ячĕпе тата РСФСРăн М. Горький ячĕпе хисепленекеннисене. Тата еплерех публицистикăлла хĕрӳ те çивĕч статьясемпе очерксем çырса пичетлет вăл, тăван çĕрпе ял ĕçченĕсен нуши пирки е хресчен ĕçĕ-хĕлĕнчи бюрократла пăтăрмахсене питлекен ыйтусем хăюллăн хускатса.

Унăн çивĕч куçĕ пурне те витĕр курса тăнă, ĕçчен алли сухапуç та, перо та, кирлĕ пулсан — пăшал та çирĕп тытнă. Утмăл ытла кĕнеке парнелерĕ Я. Ухсай тăван халăхне.

Юратрăм эп, хирсем, сире,
Сана та, сĕм-хура вăрман!
Нихçан та шухă чĕрере
Ку юрату çухалмĕ ман.
Нихçан та эп хăватăра
Манмастăп, хамăн юррăмра
Ура тапса, пуçа ухса
Сире мухтатăп эп, Ухсай.

Çапла каланăччĕ вăл хăйĕн пĕр сăввинче. Ура тапса, пуçа ухса туртрĕ сăвăç чăваш поэзийĕн лавне çур ĕмĕр хушши, çĕршывăмăрăн анлă çул-йĕрне, чăваш çыннин терчĕпе савăнăçне поэзи мелĕсемпе тĕпчерĕ.

Поэт пулса тăрас çул-йĕрте вырăс поэзийĕн тĕнчине кĕни, А. Твардовский, Я. Смеляков, М. Светлов, Е. Исаев, Н. Старшинов пек сăмах ăстисемпе çывăх паллашни. пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Унăн шухăш-кăмăлĕ Муса Джалиль тутар, Мустай Карим пушкăрт, Микола Бажан украинец, Якуб Колас белорус кăмăлĕпе пĕр килнĕ. Ахальтен мар пулĕ ăна хăй пулса курнă вырăнсенче пур çĕрте те хăйсен çынни тесе йышăннă.

Сталин кульчĕ вăхăтĕнчи хура-шура тӳсме те, Аслă Отечественнăй вăрçăра çапăçма та тӳр килнĕ ăна. Унăн «Хурçă та çуннă чух» кĕнеки çулăмлă кунсен летопиçĕ пек вуланать. Юнлă çапăçусем витĕр, çĕршер çухрăм çарпа пĕрле утса тухать поэт, кăштах канма май килсен, сăвăсем çырать. Куçĕ хупăнничченех вăл хăйне «Мир салтакĕ» тетчĕ.

Ухсай Яккăвĕ 1986-мĕш çулхи июлĕн 7-мĕшĕнче Шупашкарта вилнĕ. Хăйĕн юлашки ирĕкне пурнăçласа, ăна тăван Слакпуçĕн çывăхĕнче, хăй вилес умĕн кăшт маларах кăна хавхалануллăн мухтаса хăварнă илемлĕ Кĕсле-ту çине пытарнă. Ак мĕнле çырнăччĕ вăл хăйĕн поэминче:

Ту тăрринче пукан пек ырă
Пĕр лаптăк,
Шурă чул çинче
Хама ларма суйларăм вырăн
Инçе тавралăх умĕнче...

Сăрт çинчи вилтăпри аялтан курăнмасть те. Пурпĕр хăй халăхĕшĕн, пур ырă çынсемшĕн кунçулне шеллемен поэтăмăрăн сăн-сăпачĕ асамлă юмахри Ту-паттăр пек тухса тăрать пирĕн куçсем умне.

Я. Г. Ухсайăн пултарулăхĕпе, пурнăçĕнчи тĕрлĕ тапхăрсемпе паллаштаракан Музей-çурт та пур халĕ Слакпуç ялĕнче.

**Аристарх ДМИТРИЕВ**

